26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
13
ЫТЛАРИКУН
142(6379 №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр.

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Иккĕмĕш çурçул планне срокчен пурнăçлассишĕн

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри промысла артелĕсемпе Наркомместпром тата топливо промышленность управленийĕн предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ. Ăмăртăвăн итогĕсем республикăри предприятисемпе артельсем июнь уйăхĕнче, май уйăхĕпе танлаштарсан, лайăхрах ĕçленине кăтартса параççĕ. Канашри «Красный воин» артель июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 175,4 процент тултарнă. Май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци туса кăларассине 9 процент ÿстернĕ. Абакассинчи артель (Çĕрпÿ районĕ), май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 50 процент ÿстернĕ. Вăрнарти промкомбинат продукци туса кăлармалли çулталăкри плана июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçланă.

Йывăç предприятийĕсем те [illegible] ĕçлерĕç. [illegible] юлташ [illegible] ертсе пыракан [illegible] завод коллективĕ пĕрремĕш çурçул плана срокчен пурнăçланă. Май уйăхĕнче ăмăртура мала тухса, Оборона Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă.

Халĕ эпир 1943 çулăн иккĕмĕш çурçулне кĕтĕмĕр. Кашни завод, фабрика, предприяти тата артель коллективĕ пĕрремĕш çурçулхи плана срокчен пурнăçлама [illegible] тултарас задача лартса, фронта çĕршыва ытларах продукци парассишĕн кĕрешмелле.

Иккĕмĕш çурçул планне срокчен тултарас пирĕн пур условисем те çителĕклĕ. Анчах ĕç те [illegible] плана [illegible] тултарайман [illegible] организацисем те [illegible] çук мар. [illegible] тухăçлăн [illegible] çанăн сăлтавĕ [illegible] казала [illegible].

Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Советски районĕсенчи промысла кооперацин артелĕсем пĕрремĕш çурçул планне пурнăçламан. Тĕп сăлтавĕ—ĕç вăйне тĕрĕс организациленменни тата ĕç дисциплини сÿрĕк пулни. Шăхасанти «Сталь» промартельре хăшпĕр чух атă-пушмак çĕлекен рабочисем ĕç çук тесе ахаль лараççĕ. Çав вăхăтрах япала юсама илсе пыракан çынсен заказĕсене йышăнмаççĕ. Паллах, производствăра çакăн пек йĕркесĕрлĕхсем пулсан, çурçул планне срокчен пурнăçлама çук.

Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче çапла каларĕ: «Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă Хĕрлĕ Çара орудисем, танксем, самолетсем, пулеметсем, автоматсем, минометсем, боеприпассем, снаряжени, апат-çимĕç татах та ытларах парса тăма хушать. Апла пулсан, рабочисем, колхозниксем, пĕтĕм совет интеллигенцийĕ фронт валли икĕ хут нумайрах вăй хурса ĕçлени кирлĕ», терĕ.

Аслă çулпуçăн кăтартăвĕсене пирĕн çĕршыври ĕççынисем кăтартуллăн пурнăçласа пыраççĕ. Заводсемпе фабрикăсенче, артельсемпе предприятисенче ĕçлекен рабочисем фронтпа çĕршыв шăпи вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Улатăрти паровозсем юсакан заводри чугун шăратакан цех июнь уйăхĕнчи плана 6 кун хушшинче пурнăçланă. Уткин тата Пышкин мастерсем заданне 300 процент ытла пурнăçласа пынă.

Вăрçă вăхăтĕнче плана срокчен пурнăçласси—фронтпа çĕршывăн приказĕ пурнăçа тăрать. Çакна кашни рабочипе работницăн ăсра тытас пулать.

Социализмлă ăмăрту промышленноçра кашни уйăхрах çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшать. Вăл рабочисемпе работницăсен ĕçлес хастарлăхне ÿстерет, ĕçре юлса пыракансене малтисемпе танлашма пулăшать. Çавăнпа та предприятисемпе артельсенче социализмлă ăмăрту сÿллĕ вырăнта пулмалла.

1943 çулăн иккĕмĕш çурçулĕ пуçланни паянхине 13 кун ĕнтĕ, малта пыракан предприятисем çак вăхăт хушшинче чылай çитĕнÿсем турĕç. Анчах тунă çитĕнÿсемпе пирĕн лăпланса лармалла мар, кашни заводăн, фабрикăн, предприятин е артелĕн кулленех çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешмелле.

Пирĕн республикăри промышленность иккĕмĕш çурçул планне срокчен пурнăçлама пултарать, пурнăçламалла та. Çапла тума фронтпа çĕршыв хушаççĕ.

Аслă Ленин: «Вăрçă пурнĕрех пуçланчĕ пулсан, йăлтах вăрçă валли, кирек те мĕнле сÿрĕк ĕçленине тата вăя хурса ĕçлеменнине вăрçă вăхăтĕнчи закон тăрăх айăпламалла», тенĕ. Хальхи вăхăтра предприятисемпе учрежденисен тип тикĕс, лайăх сехет механизмĕ пек ĕçлемелле.

Рабочисемпе работницăсем! Хамăра шанса панă ĕçре пысăк тухăçлăн ĕçлер! Фронтпа çĕршыва ытлăн-çитлĕн продукци парса тăрса, ирсĕр тăшмана пĕтерме пулăшар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОРЕЛПА КУРСК тата БЕЛГОРОД енĕсенче тăшманăн пысăк вăйĕсен нумай йышлă атакисене сире-сире янă.

Пирĕн авиаци тапăнса килекен нимĕç войскисен боевой йĕркисене массăллăн пыра-пыра çапнă тата хамăрăн войскăсене çапăçу хирĕнче тăшман авиацийĕ тапăнассинчен хÿтĕлесе пынă.

Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пирĕн войскăсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 272 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 85 самолетне персе ÿкернĕ.

Тĕрĕсленĕ даннăйсем тăрăх июлĕн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсенне, малтан кăтартнă пек, 193 танк мар, 223 танк персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă, сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 94 самолетне мар, 144 самолетне персе антарнă.

☆ ☆ ☆

Орелпа Курск енче пирĕн войскăсем тăшманăн атакисене сире-сире янă. Пĕр соединенин участокĕнче нимĕçсем темиçе вырăнтан атакăлама тытăннă. Пирĕн чаçсем тăшманăн 10 атакине, пĕрин хыççăн теприне, сире-сире пăрахнă та хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Çавăн пек нимĕн те парайман атакăсем туса, тăшман хăйĕн 1500 çити салтакне офицерне çухатнă. Нимĕçсен 40 танка çити, 16 оруди тата 70 автомашина пĕтерсе тăкнă. Тепĕр соединенин участокĕнче иртенех пĕр-пĕрин çине вăйлăн пересси пуçланса кайнă. Пирĕн артиллеристсем нимĕçсен „тигр" йышши темиçе танкне персе çĕмĕрнĕ, тăшман пехотине 2 полка çити сапаласа янă, вĕсенчен пин пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

Тăшманпа вăйлăн çапăçса, пирĕн боецсемпе командирсем совет хĕçпăшалĕн [illegible] кăтартаççĕ. Киселев юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени нимĕç пехотин 2 батальонне тата 15 танк çавăрса илнĕ. 12 сехет хушши çапăçнă хыççăн пирĕн боецсем тăшманăн [illegible] тата 7 танкне пĕтерсе, малтанхи позицине тавăрнă. Нимĕçсен 400 салтакне офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Бронебойщиксен Бухтояров юлташ командир пулса ертсе пыракан взвочĕ тăшманăн 7 танкне тата бронемашинине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 2 взвочĕ тата „тигр" йышши 5 танкĕ Губаков юлташ командир пулса тăракан подразделение атакăланă. Пирĕн боецсем, тапăнса килекен гитлеровецсене çывăха пыма пана та, çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем пăрахса нимĕçсен танкĕсене пилĕккĕшне те çунтарса янă. Красноармеец-разведчиксем Косив, Быстрицкий, Минин, Калинин, Семенов, Подоляев тата Иващенков юлташсем, капитан Закревский юлташ командир пулса ертсе пынипе, тăшман йышăнна яла шăвăнса кĕнĕ те нимĕçсен штабри танкне тытса илсе ăна хăйсен чаçне илсе килнĕ.

* * *

Белгород енче пирĕн войскăсем тăшманăн танкĕсемпе пехотине хирĕç вăйлăн çапăçнă. Нимĕçсем çапăçăва йышлă резервсем кĕртсе янă, вĕсем хăйсен танкĕсем пирĕн оборона çине савăлланса кĕнĕ участокра малалла тапăнса пыма хăтланаççĕ. Совет чаçĕсем хастарлăн контратакăсем туса тăшман вăйĕсене малалла кайма памаççĕ тата ăна çавтери пысăк сиен кÿреççĕ. Пĕр соединенин чаçĕсем кун каçиччен нимĕçсен 58 танкне пĕтерсе тăкнă. Гварди капитанĕ Стромога юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллери батарейи çине тăшман танкĕсен ушкăнĕ тапăнса пынă. Совет артиллерисчĕсем тăшман атакине сирсе пăрахнă, „тигр" йышши 6 танка пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне бронебойщиксем — гварди красноармеецĕсем Гнездников, Альгиев тата Ганжа юлташсем пĕрер „тигра" çунтарса янă. Виçĕмкун гварди старши лейтенанчĕ Хрипач юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн 10 танк нимĕçсен 70 танкĕпе, совет позицийĕсем çине савăлланса кĕнĕскерсемпе, çапăçма тытăннă. Хаяр çапăçура гвардеец-танкистсем тăшманăн 23 танкне пĕтерсе тăкнă. Зенитчиксен майор Качмар юлташ командир пулса тăракан подразделенийĕ, тăшман авиацийĕн атакисене сирсе тăрса, пĕр кун хушшинче нимĕçсен 10 самолетне персе антарнă.

* * *

Пирĕн авиаци Хура тинĕсре тăшманăн подводнăй лодкине путарнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн войскăсем тăшман çине персе тăнă. Совет артиллеристсем нимĕçсен 5 дзотне тата наблюдательнăй пунктне [illegible] çирпĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне çирпĕтерсе янă, 2 автомашина тата грузсем тиенĕ 30 çити лава пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçри разведчиксем, противник вырнаçса тăнă çĕре [illegible], пырса кĕрсе, тăшман салтакĕсене [illegible] вĕлерсе пĕтернĕ. Вĕсем 8 автомат тата ытти хĕçпăшалсем тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче совет артиллеристсемпе минометчиксем нимĕçсен 16 дзотне, 5 землянкине тата 7 наблюдательнăй пунктне ишĕлтернĕ. Пирĕн снайперсем 86 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

Ленинград патне пымалли вырăнсенчи сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 6 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Киев облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕн разведчиксем [illegible] хăйсен командирне нимĕç войскисен пысăк колонни çывхарса килни çинчен пĕлтернĕ. Совет патриочĕсем çул çинче засада тунă та гитлеровецсем çывăха пырса çитсен вĕсем çине пăшалсемпе пулеметсенчен пеме тытăннă. Нимĕçсем хирĕç тăмасăрах тарса сапаланса пĕтнĕ. Çул çинче тăшманăн 100 çити вилли выртса юлнă. Украина партизанĕсен тепĕр отрядĕнчи ушкăн июнĕн 24-мĕшĕнче нимĕçсен бронепоездне сирпĕнтерсе янă. Житомир облаçĕнчи Богун ячĕпе тăракан отрядри партизансем нимĕçсен çар эшелонне минăсем лартса сирпĕнтерсе янă. Чугунçулăн çав участокĕнче поездсем çÿресси чарăнса ларнă.

* * *

Хĕрлĕ Çар енне „Арадо—66" йышши самолетпа нимĕç летчикĕ вĕçсе каçнă. Вăл пирĕн территори çине анса ларнă. Самолечĕ унăн юсавлах пулнă. Вĕçсе каçнă летчик çапла каланă: „Эпĕ вырăссем енне хам ирĕкпе вĕçсе каçрăм, мĕншĕн тесен Германи çĕнтерессине ĕненми пултăм. Нимĕç çарĕн кадровăй дивизийĕсене, унăн чи опытлăрах офицерĕсемпе салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ ĕнтĕ. Нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсен, уйрăмах авиацийĕн, материаллă-техникăллă хăвачĕ хавшаса кайнă. Кучухнехи чаплă самолетсем тата квалификациллĕ пилотсем çитменни сисĕнет. Боевой вĕçевсенче халĕ кучухнехи çапăçу условисем ыйтнине тивĕçтереймен, кивелнĕ, юрăхсăр машинăсемпе усă кураççĕ. Эпĕ пулнă соединенири летчиксене „Фокке—Вульф—58" тата „Арадо—66" йышши кивелсе çитнĕ учебнăй самолетсемпе вĕçтереççĕ. Çавăн пек самолетсемпе хăйсене хăйсем вĕлерес текенсем кăна вĕçме пултараççĕ. Летчиксем вĕсене „моторлă тупăксем" теççĕ. Пирĕн группăра пулнă „Фокке—Вульф—58" йышши 9 самолетран 4 самолет моторсем юсавлă мар пирки çапăçăва кĕричченех ÿксе çĕмĕрĕлнĕ. Манăн ун пек ухмахла вилес килмерĕ, эпĕ вара хам кунçулпа хам хуçа пулас терĕм".

ИЮЛĔН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОРЕЛПА КУРСК тата БЕЛГОРОД енĕсенче тăшман танкĕсемпе пехотин атакисене сире-сире пăрахнă.

Пирĕн войскăсем Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 162 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 31 самолетне персе ÿкернĕ

☆ ☆ ☆

Орелпа Курск енче тăшман, хăй наступлени тунă кунсенче пĕринче те ăнăçу тăваймасăр, паян хăйĕн пысăк вăйĕсемпе совет оборонине татса кĕме çĕнĕрен хăтланса пăхнă. Нимĕçсем пĕр вăхăтрах 400-ре çити танк тата пехотăн пысăк йышне çапăçăва кĕртсе янă. Пĕр соединенири боецсем тăшманăн хаяр атакине сирсе пăрахнă. Гитлеровецсен кайран тунă атакисем те пурте путланса ларнă. Каç пулнă тĕле тăшман [illegible] 2000 ытла салтакне офицерне çухатнă. Тепĕр участокра пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ тăшманăн танковăй дивизине, пирĕн позицисене атакăлама хатĕрленнĕскере, ĕнер ирхине пырса çапнă. Штурмовиксем пырса çапнипе тăшманăн темиçе вунă танкне пĕтерсе тăкнă, нимĕç пехотине икĕ полка çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен атаки путланса ларнă. Фронтăн çав участокĕнче арканупуçланнипе усă курса, пирĕн чаçсем гитлеровецсене атакăланă та вĕсене халăх пурăнакан икĕ пунктран хĕссе кăларнă.

* * *

Белгород енче пирĕн войскăсем тăшманпа вăйлăн малалла çапăçнă. Ирхине нимĕçсем пирĕн позицисем çине артиллерирен вăйлăн персе тăнă. Унтан вара тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем темиçе енчен атакăлама пуçланă. Пĕр чаçăн позицийĕсем çине тăшманăн 100 ытла танкĕ тапăнса пынă. Çапăçура пирĕн боецсем тăшманăнне 34 танк, 3 бронемашина тата 14 оруди пĕтерсе тăкнă. Гварди сержанчĕн Смородина юлташăн оруди расчечĕ усă позицирен персе нимĕçсен „тигр" йышши 4 танкне çунтарса янă, 3 танкне персе çĕмĕрнĕ.

Совет авиацийĕ хамăрăн çĕр çинчи войскăсене сывлăшран хÿтĕлесе тăрать тата нимĕçсен техникипе чĕрĕ вăйне хăватлăн пыра-пыра çапать.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче Дутов юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксем тăшман оборонин малти хĕрри урлă шăвăнса каçнă та пĕр блиндажа, унта ларакан нимĕçсемпе пĕрлех, сирпĕнтерсе янă. Каялла тавăрăннă чухне, пирĕн боецсем гитлеровецсен отрячĕпе тĕл пулнă. Алвĕççĕн пуçланса кайнă çапăçура разведчиксем 16 нимĕçе вĕлернĕ тата темиçе салтака тыткăна илнĕ. Пĕр чаçри артиллеристсем нимĕçсен 4 орудине пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 9 блиндажне тата наблюдательнăй пунктне ишĕлтернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пĕр чаçри гвардеец-минометчиксем нимĕç пехоти пухăнса тăнă вырăна вăйлăн пенĕ. Гитлеровецсене пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксен ушкăнĕ нимĕçсем вырнаçса тăнă çĕре сăрхăнса кĕнĕ. Гранатăсем пăрахса 3 дзота сирпĕнтерсе янă, 30 гитлеровеца вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăшман пехотин икĕ роти совет позицийĕсене çапăçса разведка тума хăтланнă. Пирĕн боецсем нимĕçсене пăшалсемпе пулеметсенчен тата минометсенчен персе кĕтсе илнĕ, нимĕçсем васкаса каялла чакнă. Пралук карти патĕнче гитлеровецсен 75 вилли выртса юлнă. Пĕр чаçри артиллеристсем тăшманăн 7 блиндажне ишĕлтернĕ, 3 орудине, 10 пулеметне, миномет батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче артиллеристсем минометсенчен персе, тăшманăн 22 дзотне ишĕлтернĕ, 5 наблюдательнăй пунктне тата 13 пулемет точкине пĕтерсе тăкнă. Пĕр подразделенири снайперсем юлашки 25 кун хушшинче 158 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ. Çав подразделенири снайпер Алексей Федоров вăрçă пуçланнăранпа 244 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Брест облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ июль уйăхĕнче нимĕçсен 24 чугунçул эшелонне ÿлĕнтерсе янă, 16 паровоза тата 340 вагона çĕмĕрнĕ. Çав отрядри партизансем, пысăк мар ушкăнсене уйăрăлса кĕрешсе, тăшман гарнизонĕсем çине темиçе хутчен пыра-пыра тапăннă та нимĕçсен 100 ытла салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Брест таврашĕнчи тепĕр отрядри партизансем çак кунсенче нимĕçсен фронталла каякан икĕ çар эшелонне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 4-мĕш танковăй дивизийĕнчи 35-мĕш танковăй полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Курт Блюме çапла каласа панă: "Июлĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Гитлерăн приказне вулса пачĕç. Приказра: ыран нимĕç çарĕ çĕнĕ наступлени пуçласа ярать, çакă вăл вăрçă епле вĕçленессине татса пама тивĕçлĕ, тенĕ. 35-мĕш полк умне вырăссен оборонине татас задачăна лартнăччĕ. Наступлени пуçлама полкăн 100 çити танкĕ хатĕрленсе тăчĕ. Çав вăхăтра пире вырăс авиацийĕ атакăларĕ те темиçе машинăна стройран кăларчĕ. 5 сехетре пирĕн батальон çул тăрăх савăл майлă йĕркеленсе тăрса атакăна тухрĕ. Высота тăррине хăпарса çитсен, пирĕн çине вырăссем противотанковăй орудисемпе противотанковăй пăшалсенчен хĕреслетсе пере пуçларĕç. Пирĕн йĕрке сасартăках пăсăлса кайрĕ, танксем вăрахăн шума тыгăнчĕç, юнашарти танк çунма пуçларĕ. Рота командирĕн малта пыракан танкĕ чарăнса ларчĕ, унтан каялла чакма пуçларĕ. Пире халиччен вĕрентни кунта пĕтĕмпех вырăнсăр пулчĕ. Çапăçусем пире шкулта вĕрентнĕ пек мар пулса пычĕç. Пире танксемпе шăтарса кĕме вĕрентнĕ тактика юрăхсăр пулни курăнчĕ. Часах манăн танка персе çĕмĕрчĕç, танк ăшĕнче пушар тухрĕ. Эпĕ çунакан танкран сиксе тухма васкарăм. Çапăçу хирĕнче çĕмĕрнĕ танксем 40-рен кая мар тăратчĕç, вĕсенчен нумайĕшĕсем çунатчĕç".

Пирĕн авиаци тăшман войскисемпе аэродромĕсене пыра-пыра çапни

Июлĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче тăшманăн войскисемпе техникине каллех пыра-пыра çапнă. Çавăн пекех пирĕн сывлăш-çар вăйĕсем тăшман аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Нимĕçсен çĕр çинче ларнă бомбардировщикĕсемпе истребителĕсене нумай пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Боевой заданирен пирĕн икĕ самолет таврăнман.

Пирĕн авиаци Белгород чугунçул узелĕ çине бомбăсем пăрахни

Июлĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Белгород чугунçул узелĕ çине бомбăсем пăрахнă, унта тăшман эшелонĕсем нумай капланса тăнă пулнă. Бомбăсем пăрахнипе пула пушарсем нумай тухнă. Пирĕн самолетсен экипажĕсем взрывсем нумай пулнине асăрханă. Пĕр взрыв уйрăмах вăйлă пулнă. Пирĕн самолетсем хăйсен аэродромĕсем çине пурте таврăннă.

Нимĕç летчикĕсем хăйсен танкĕсем çине бомбăсем пăрахнă

ОРЕЛПА КУРСК ЕНĔ, июлĕн 10-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Халăх пурăнакан Н. пункт районĕнче нимĕçсен 200 танкĕ пирĕн позицисене атакăланă. Инçех те мар засадăра, вăрçа кĕме хатĕрленсе, пирĕн танксем тăнă. Çапăçу хирне нимĕç самолечĕсем вĕçсе çитнĕ. Вĕсем хăйсен танкĕсене совет танкĕсем вырăнне йышăннă. Вара вĕсем хăйсен мĕнпур бомбисене йăлтах хăйсен танкĕсем çине пăрахнă. Нимĕç бомбардировщикĕсем вĕçсе кайсанах, пирĕн танксем гитлеровецсен танкĕсене аркатма тытăннă. Нимĕçсен 60 ытла танкне çĕмĕрсе тăкнă е çунтарса янă. Ыттисем каялла хăйсен малтанхи позицийĕсем çине чакнă

З. ЛИПАВСКИЙ.

ВУЛАВ ÇУРЧĔН ĔÇНЕ ЛАЙĂХЛАТМАЛЛА

ИШЛЕЙ. Мижер ялсовечĕ çумĕнчи вулав çурчĕ (заведующийĕ Сорокин) йĕркеллĕ ĕçлемест. Вулав çуртĕнче нимĕн йĕрки те çук. Пĕр ватăк шкаф ăшĕнче кĕнекесем сапаланса выртаççĕ. Кунта мĕнле кĕнекесем пуррине те пĕлме çук. Сорокин юлташ пĕлтернĕ тăрăх, вулав çуртне килсе тăракан хаçатсене комсомол организацин секретарĕ Волкова илсе тăрать.

Уборка пуçланиччен вулав çурчĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла.

Виçĕ çыншăн ĕçлетĕп

Эпĕ пĕр заводра 1942 çулти февраль уйăхĕнче ĕçлеме пуçларăм. Унччен яланах колхозра ĕçленĕ. Малтанхи вăхăтра мана цехри мастер Малыхин юлташ хам тума пултарнă заданисене паратчĕ. Вăл куллен эпĕ мĕнле ĕçлесе пынине тĕрĕслесе тăратчĕ. Мастер Малыхин юлташ пулăшнипе эпĕ кĕске вăхăт хушшинчех сборочнăй цехри ĕçе вĕренсе çитрĕм. Халĕ шанса панă ĕçре кулленхи заданине 300 процент таран тултаратăп.

Пур ĕçре те тăрăшни кирлĕ. Малтанхи вăхăтра мана ĕçлеме йывăрччĕ. Сахал мар эпĕ ĕç вăхăчĕ иртнĕ хыççăн цехра пĕр пĕччен юлса та ĕçленĕ. Темĕн пек йывăрлăхсем килсе тухсан та нормăна тултармасăр ĕçе пăрахман. Хамăн квалификацине тата пĕлĕве ÿстерес майпа темиçе хутчен те техминимум шкулĕнче вĕрентĕм. Мастерсен асăрхаттарăвĕсене яланах [illegible]. Çапла май-[illegible] [illegible] норма [illegible] тултаратăп.

З. ИВАНОВА,
Пĕр заводри стахановка.

Древпромсоюз артелĕсем

Республикăри древпромсоюз системинчи промысла артелĕсем пĕрремĕш çурçул программине вĕçлесе хыçа хăварнă. [illegible] çурçулхи плана тултарас [illegible] конкретлă обязательствăсем илнĕ.

Пĕрремĕш çурçула Канашри Сталин ячĕпе тăракан (правлени председателĕ Баранов юлташ), Калинин районĕнчи «Новая сила», Йĕпреçри «Кооплеспром» тата Шупашкарти Лесхим артельсем [illegible] пĕрремĕш çурçул задание пĕтĕм продукци кăларас енчен 202 процент, ширпотреб енĕпе 303 процент, Канашри Сталин ячĕпе тăракан артель пĕтĕм продукци кăларас плана 157 процент, ширпотреб енĕпе 244 процент пурнăçларĕç. Чылай артельсем юлашки уйăхсенче хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Йĕпреç районĕнчи «Кооплеспром» артель (правлени председателĕ Лазарев юлташ) март—апрель уйăхĕсенче производство программине тултарса пырайман. Икĕ уйăх хушшинче, май—июнь уйăхĕсенче, вăл хăйĕн ĕçне тĕпренех лайăхлатрĕ. çурçулхи плана срокчен пурнăçларĕ.

Июнь уйăхĕнче, иртнĕ уйăхсенче ĕçленипе танлаштарсан, пур артельсем те тухăçлăрах ĕçлерĕç. Ку уйăхра, пĕтĕмĕшпе илсен, продукци кăларас плана артельсем 250 пин тенкĕлĕх ÿстерчĕç. Шупашкарти Лесхим артелĕн (правлени председателĕ Викторов юлташ) июнь уйăхĕнче план тăрăх 6 тонна тикĕт кăлармалла пулнă пулсан, вăл 8,5 тонна кăларнă, 7 тонна кăмрăк кăларас вырăнне 18 тонна, 1,5 тонна скипидар вырăнне 2,5 тонна юхтарса кăларнă. Июнь уйăхĕнче планран ирттерсе 36 пин тенкĕлĕх продукци кăларнă. Ку ĕпĕ артельсем тăрăшса ĕçленин результачĕсем.

Çав вăхăтрах хăшпĕр промысла артелĕсем пĕрремĕш çурçулта кирлĕ пек ĕçлесе пыраймарĕç. Новинскри (Сĕнтĕрвăрри районĕ) «Кооператор» артель (правлени председателĕ Ермаков) пĕтĕм продукци кăларас плана 77 процент, ширпотреб енĕпе 63 процент кăна пурнăçланă. Комсомольски районри «Заря» артель пĕтĕм продукци кăларас плана 74 процент, ширпотреб енĕпе 80 процент çеç пурнăçланă. Çавăн пекех Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан артель те çурçул программине 30 процент кăна тултарнă. Асăннă артельсен руководителĕсем çурçулхи задани пурнăçланманнине чĕртаварсем çителĕксĕр пулни çине йăвантараççĕ. Паллах, ку сăлтав мар. Чылай артельсем вырăнти ресурссемпе анлăн усă курмаççĕ. Çавна пула вĕсем производство планне пурнăçласа пыраймаççĕ.

Халĕ иккĕмĕш çурçула кусрăмăр. Кашни артель руководителĕн иртнĕ çурçулта пулнă йăнăшсене шута илсе, хăйсене кирлĕ пек вывод тумалла. Ку çурçулта текех вăл йăнăшсем пулмалла мар.

Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче: «Пирĕн мĕнпур çынсемпе пĕтĕм учрежденисем тылра пĕр-пĕрне килĕштерсе, лайăх сехет механизмĕ пек тикĕс ĕçлени кирлĕ», терĕ. Çакă ĕнтĕ пирĕн промысла артелĕсем пурте фронтпа çĕршыва ытлăн-çитлĕн продукци пама тивĕçли çинчен калать.

А. АНДРЕЕВ,
Чăваш древпромсоюз председателĕ.

Республика уйхирĕсенче

13 колхоз уборкăна хатĕр мар

ШĂХАСАН, июлĕн 12-мĕшĕ. (Хамăр корр., телефонпа). Районри колхозсенче тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ĕç питĕ начар пулса пырать. Уборкăна мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслес ĕç пур колхозсенче те пулса иртрĕ. Тĕрĕслÿ районри 13 колхоз тырпулсене пухса кĕме çителĕксĕр хатĕрленнине кăтартса пачĕ. [illegible] Июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне районри колхозсенче 143 жнейкăран 114-шне, 15 лобогрейкăран 10-шне, 31 косилкăран 23-шне, 122 сортировкăран 96-шне, 47 молотилкăран 27 молотилкине юсанă.

„Чăваш. ЧИК" колхозра ялхуçалăх машинисене пĕрне те юсаман. Анаткассинчи „Париж Коммуни" колхозра тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслеме ВКП(б) райкомĕпе райисполком Филиппов юлташа янă. Анчах Филиппов тĕрĕслÿре пулмарĕ. Вăл смотр ирттерме пуçламĕш парторганизаци секретарьне В. Михайлова юлташа хушса хăварнă та хăй урăх çĕре тухса кайнă. Тĕрĕслÿ хыççăн кунта „колхоз [illegible] колхозăн 2 жнейки [illegible] тепри [illegible] сем çук. Колхоз уборка вăхăтĕнче 40 урапа кирлĕ пулать, халĕ 35 урапа çеç, вĕсенчен те 9 урапи юсавсăр. Амбарсене пĕрне те тасатман. Смотра 7 урапа çеç илсе тухнă, ыттисене хут тăрăх кăна тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслÿре колхозăн транспорт инвентарĕсем çитменнине палартнă, çав вăхăтрах [illegible] çук.

Уборкăна хатĕрленес ĕçре „Сосновка", „Победа", Чкалов ячĕпе тăракан, „Красный пахарь" колхозсем те юлса пыраççĕ. Машинăсене юсаса пĕтермен, транспорт инвентарĕсем çитмеççĕ. Михĕсемпе шăналаксем хатĕрлемен. „Красноармеец" колхозра пĕр михĕ те çук.

Çав çитменлĕхсене пĕлсе тăрсах, райçĕрĕç пайĕ вĕсемпе килĕшсе ларать, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмасть.

В. ВЕСЕЛОВ.

Тĕрĕслÿре палăрнă çитменлĕхсене пĕтерме васкамаççĕ

ЭЛĔК, июлĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырă вырса пухма хатĕрленнине пур колхозсенче те пăхса тухнă. Комиссисем хăйсен ĕçне тĕплĕн турĕç. Çитменлĕхсене кăтартса пачĕç.

Тÿрех калас пулать, тырă вырма тухма халĕ районри нумай колхозсем хатĕрленсе çитмен. Тĕрĕслÿ комиссийĕсем çакна уççăнах кăтартса пачĕç. Колхоз председателĕсен, партипе советăн ялти активĕн çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме тăрăшмалла. Кашни колхоз уборкăна пур енчен те лайăх хатĕрленсе çиттĕр.

Юманлăхри Буденный ячĕпе тăракан колхозра тĕрĕслÿ пулса иртнĕ хыççăн уборкăна хатĕрленес ĕç лайăхрах пулса пыма пуçларĕ. Правлени уборка вăхăтĕнчи ĕçсене йĕркелесе пымалли план турĕ, кашни колхозникпе колхозницăна ĕçе вырнаçтарса тухрĕ. Ĕç планне колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе-явса çирĕплетнĕ, тумалли ĕçсемпе кашни колхознике паллаштарнă. Колхозăн халĕ жнейкăсем ĕçе тухма хатĕр, урапасемпе лаша кÿлмелли таврашсем те, михĕсем те кирлĕ чухлĕ юсаса хатĕрленĕ. Халĕ колхозниксем амбарсемпе итемсене тасатнă çĕрте ĕçлеççĕ, пахча-çимĕçсене çумкуракĕсенчен тасатаççĕ. Тырă вырма тухас вăхăт çитиччен кунта силос хывмалли плана тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Анчах хăшпĕр колхозсенче тĕрĕслÿ комиссийĕсем ĕçре кирлĕ пек улшăнусем тăваймарĕç. Мăн Вылăри Ленин ячĕпе тăракан колхозра тĕрĕслÿ июлĕн 8-мĕшĕнче пулса иртрĕ, анчах комисси палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес енĕпе халĕ нимĕн те туман. Пĕр жнейка çеç пулин те, ăна та юсаман, кĕреплеллĕ çавасем 17 çеç. Лашасемпе ĕçлеме 20 урапа çеç, вĕсенчен те виççĕшĕ ванчăк. Витнĕ итемсен тăррисем шăтăк-çурăк, амбарсене тасатма тытăнман та.

Тĕрĕслÿ комиссийĕсем палăртнă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле. Тырпула вăхăтра пуçтарса илме тĕплĕн хатĕрленес пулать.

Х. ЛИСИН.

Пуян тырпула лайăх пухса кĕртме хатĕрленетпĕр

Йĕпреç ялсоветне кĕрекен (Йĕпреç районĕ) «Тымар», «Красный Октябрь», Крупская ячĕпе тăракан колхозсем тырпулсене çумкуракĕсенчен лайăх тасатрĕç. Тырăсем кăçал лайăх пулчĕç, гектартан çĕр пăтран кая мар тухассине ĕмĕтленме пулать. Колхозниксем ăнăçлă ÿсекен тырпула пысăк пахалăхпа, хăвăрт пухса илме хатĕрленеççĕ. Жнейкăсене юсаса лартрĕç, косилкăсене те тырă вырмалла тунă, çурласене шăллаттарнă.

«Красный Октябрь» колхозпа Крупская ячĕпе тăракан колхоз ăмăртса ĕçлеççĕ. Социализмлă ăмăрту договорне лайăхрах пурнăçа кĕртессишĕн кашни колхозник хавхаланса ĕçлет. Ку колхозсем халĕ тырă вырма пур енчен те лайăх хатĕрленсе çитрĕç. Уйри тырпула сыхлама дозорсем тунă. Каçсерен тырпула утлă дозорсем сыхлаççĕ. Витнĕ итемсем, амбарсем çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр. Итемсене хырса тасатнă, пушара хирĕçле мерăсене пурне те йышăннă. Амбарсене тасатса дезинфекциленĕ.

Утă çулса пуçтарнă. Вылăх-чĕрлĕхе çитерсе хĕл каçармалăх утта йăлтах капансене хывнă, государствăна та парса татнă. Крупская ячĕпе тăракан колхоз силос хывмалли плана тултарчĕ.

Д. ВАСИЛЬЕВ,
Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Утă парса татрĕç

ЭЛĔК, июлĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Хирлепри Буденный ячĕпе тăракан колхоз транспорт бригади организациленĕ. Бригадăра 9 çын, 9 лаша. Вĕсен ялănах государствăна тырă, утă-улăм, пахча-çимĕç леçсе панă çĕрте ĕçлемелле. Бригадирĕ—К. Иванов колхозник. Халĕ колхозăн транспорт бригади Заготсено пункчĕн склачĕсене утă турттарать. Колхоз государствăна 35 центнер утă пачĕ.

Çирĕккасинчи «Самолет» колхоз государствăна утă парас обязательствăна тĕштырă парса пĕтĕмĕшпех тултарчĕ. Утă вырăнне 1250 центнер тĕштырă леçсе пачĕ. Çавăн пекех Охверкинăри «Хăват» тата «Майăн 1-мĕшĕ» колхозсем те государствăна утăшăн тĕштырă пачĕç.

Л. НИКОЛАЕВА.

Çамрăксем пурте силос хывнă çĕрте

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлĕн 12-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Чăваш республикинчи колхозсенче халь июлĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа силос хывмалли вунăкунлăх пырать. Вунăкунлăха комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвĕпе ирттермелле тунă. Вĕсем халь силос хывнă çĕрте пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ.

Упкри «Коминтерн» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем пурте силос хатĕрленĕ çĕрте. Ĕнер вĕсем воскресник ирттерчĕç. Воскресникре 17 комсомолец, союзра тăман 16 çамрăк пулчĕç. Кунĕпех хĕрÿллĕн ĕçлерĕç. Çак кĕске вăхăт хушшинче вĕсем 65 тонна силос хывса хăварчĕç.

Çавăн пекех воскресник ĕнер «Свобода», Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче те пулса иртрĕ. Çамрăксем хас-[illegible] Икĕ талăк хушшинче [illegible] силос хывмалли плана тултарчĕç.

С. ШАДИН.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Райкомол работникĕсем çула май кăна кĕрсе тухаççĕ

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Комсомолецсен колхозра мĕнпур ĕçсен организаторĕсем пулмалла. Анчах комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем [illegible] Анат Юнтапари Молотов ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем колхоз производствинче çителĕксĕр хутшăнаççĕ, колхозниксем хушшинче масса-политика ĕçне организацилемеççĕ. Комсомол организацийĕн секретарĕ Н. Никитина комсомолецсемпе ĕçлессине манса хăварнă. Вăл 6 уйăх хушшинче пĕр пуху çеç ирттернĕ. Çавăнпа комсомолецсен йышĕ те ÿсмест. 1943 çулта комсомол ретне пĕр çамрăка та илмен. Ялта комсомол ретне кĕме тивĕçлĕ çамрăксем—колхоз производствинче [illegible] нумай.

Высоккăнри Сталин ячĕпе тăракан колхозра комсомолецсем шурĕ 13 çын. Комсомолецсен колхоз производствипе [illegible]

[illegible] «Новый путь» колхозра комсомолецсем кăна 6 [illegible] Комсомол организацийĕн секретарĕ Н. Макаров колхозра счетовод пулса ĕçлет. [illegible]

Колхозра ĕç дисциплини [illegible]

Çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе комсомол организацийĕ [illegible] Кунта организацисене пулăшма [illegible] ВЛКСМ райкомĕ (секретарĕ В. Иванов) нимĕн те туман. ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем асăннă колхозсенче сахал пулаççĕ. Пулсан та çула май çеç кĕрсе тухаççĕ, нимĕнле кăтарту та парса хăвармаççĕ.

[illegible] никсене хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа кăтартмаççĕ, вĕсемпе калаçусем ирттермеççĕ.

Колхозра комсомолка С. Леонтьева юлташ ертсе пыракан бригада ытти бригадăсенчен кая юлать. Бригада тырпулсене пухса кĕртме халĕ те хатĕрленсе çитмен. Урапасемпе ытти [illegible]

Çакнашкал организацисем çине ВЛКСМ райкомĕн ытларах çавăрăнса пăхмалла.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленеççĕ

КАНАШ. Ямакассинчи тулли мар вăтам шкул 1942—43 çулхи вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Ачасем вĕренÿре пурте пекех ĕлкĕрсе пычĕç. З. Степанова, Я. Сидоренко, Ф. Иванова, Маслова, Краснова т. ыт. вĕренекенсем те вĕренÿ çулне «отлично» паллăсемпе вĕçлерĕç. Шкул директорĕ А. М. Зобов ертсе пынипе шкул ачисем Тимур командисем организацилерĕç. Вĕсем фронтовиксен çемьисене тĕрлĕ ĕçре пулăшрĕç. Çавăн пекех кунта вăрçă ĕçне вĕренессине те военрук Кириллов аван туса пычĕ.

Вĕренÿ çулне вĕçленĕ хыççăнах тулли мар вăтам шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме пуçларĕ. Ачасем валли хутсем, кĕнекесем хатĕрлеççĕ. Паянхи куна 25 парта, 2 кăмака юсанă. Хĕлле хутма шкул ачисен вăйĕпе 150 кубла метр вутă хатĕрлемелле. Паянхи куна 5 кубла метр ытла хатĕрленĕ.

Шкул кăçал 3 гектар çĕр çине тĕрлĕ çимĕçсем акса хăварнă. Унта ачасем куллен ĕçлеççĕ. Тепĕр çул кунта ачасем валли вĕри апат пулать.

И. МАКСИМОВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Районри учительсемпе вĕренекен ачасем тăрăшсах хăйсен шкулĕсем валли вутă хатĕрлеççĕ. Иванькоăри, Пĕрремĕш Ирçери, Турри Мучарти тулли мар вăтам шкулсем, Никольскри, Изамбаевăри, Стрелецкри пуçламĕш шкулсем вутă хатĕрлемелли плана пĕтĕмпех тултарчĕç. Халĕ хатĕрленĕ вутта шкула турттарас ĕç пырать.

Палтайри вăтам шкул 230 кубометр вутă касса хатĕрлерĕ. Кунта шкул çуртне, партăсемпе сĕтел-пукансене юсаса çитернĕ. Вĕренÿре кирлĕ хатĕрсемпе учебниксем те çителĕклĕ.

Шкул участокĕнче пахча-çимĕçсене вĕренекенсем пăхсах тăраççĕ, çумкурăкĕсенчен тасатаççĕ.

А. К.

Çулйĕр ĕçне ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр

КАЛИНИНО, июлĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Район çулйĕр ĕçĕн планне пур енĕпе те тултарчĕ. Çĕр ĕçĕн планне 100 процент, чул кăларса турттармалли плана 101 процент, çавăн пекех ытти ĕçсемпе те плана ытлашшипех пурнăçларĕ.

„Броневик" колхозри Василий Мясников юлташ ертсе пыракан бригада пур çĕрте те кăтартуллăн ĕçлерĕ. В. Мясников çулйĕр ĕçĕнче темиçе хутчен те преми илчĕ.

„Çутталла" колхозри (çулйĕр ĕçĕн бригадирĕ Д. Николаев юлташ) П. Васильева, П. Семенова, Павлова юлташсем кашни кунах задание 200—250 процент тултарса ĕçлерĕç. „Чăваш Коммуни" колхозран ĕçлеме янă П. Тимофеева, коммунист-бригадир Е. Прокопьев, Н. Вырсова юлташсем те задание 200 процент тултарчĕç. Чул турттарас ĕçре Буденный ячĕпе тăракан, „Новая жизнь", „Çĕнĕ ял" колхозсем аван ĕçлерĕç.

Ф. РОМАНОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен войскисем Сицили утравĕ çине ансах тăраççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: союзниксен войскисем Сицили утравĕн [illegible] Джела таврашĕнче [illegible] Тинĕс-çар вăйĕсем пулăшнипе американецсен чаçĕсем тăшманăн çав районти çыран хĕрринчи позицийĕсене [illegible]

Рейтер агентстви пĕлтерет тăрăх, союзниксен войскисем Сицили çыранĕн 160 километр хушшинче тĕрлĕ пунктсенче туха-пуха аннă. Утрав çине войскăсем, орудисем, транспорт таврашĕ тата снарядсем [illegible]

Акăлчансен тата американецсен тинĕс пехоти Сицили утравĕ çине июлĕн 9-мĕшĕнче 23 сехет те 20 минутра анма тытăннă. Парашютистсем хыççăн [illegible] позицийĕсене çирĕпленсе ларнă. Парашютистсем вĕсене тăшманăн зенитлă артиллерийĕ пеме пуçличчен çĕр çине анса çитме ĕлкĕрнĕ. Çавăн пекех планерсемпе войскăсем илсе пыракан транспорт самолечĕсене те, зенитлă артиллерисĕр пуçне, нимĕн те хирĕç тăман.

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер союзниксен бомбардировщикĕсем тăшманăн Сицилири аэродромĕсене, çыхăну пункчĕсене, транспорта тата тăшманăн утравăн шалти пайĕнчи ытти объекчĕсене те атакăланă. Июлĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен [illegible]

[illegible] Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, разведка тăвакан самолетсем [illegible]

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ [illegible] вăйлăн атакăланă.

Америка бомбардировщикĕсем тĕнĕл çĕршывĕсен войскисен Сицилири штабне пĕтернĕ

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан панă официальнăй хыпара пĕлтерет. Унта çапла каланă: американецсен йывăр бомбардировщикĕсем тĕнĕл çĕршывĕсен хĕçпăшаллă вăйĕсен Сицилири оборонин главнăй штабне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă, тенĕ.

Союзниксен войскисем Сицили хулисене йышăнаççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕн хыпарне пĕлтерет. Унта çапла каланă: союзниксен Сицили утравĕ çине анса юлнă войскисем Сиракузы, Авола, Ликата тата Поццало хулисене йышăнса илнĕ. Тăшманăн 2000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Агентствăн тепĕр пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Сицили утравĕ çине десант антарнă çĕре 2000 судно ытла хутшăннă.

Алжирти радио официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Сицили утравĕ çинчи виçĕ аэродром союзниксен аллинче. Американецсен тата акăлчансен судисем çинчен анса юлнă чаçсем Сицилин темиçе пунктĕнче июлĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата июлĕн 10-мĕшĕнче кăнтăрла парашютпа аннă войскăсемпе çыхăну тытма пуçланă.

Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен десанчĕ анма тытăнсанах 24 сехет хушшинче Сицили çине Канада войскисем темиçе пин çын аннă.

Сицилия

(Справка)

Сицилия—Вăтаçĕр тинĕсри чи пысăк утрав. Унăн лаптăкăшĕ—25.600 тăваткăл километр. Вăл Итали королевствин вăрçăчченхи территорийĕн вуниккĕмĕш пайĕ пулса тăрать. Сицили çинче 4 миллион çынна яхăн халăх пурăнать. Вăл пĕтĕм королевствăри халăх хисепĕн 1/10 пайĕнчен кăшт кăна сахалтарах.

Сицилие тĕп Италирен (Аппенин çурутравĕнчен) питĕ ансăр пролив кăна уйăрса тăрать. Пролив урлă халăх паромпа каçса çÿрет. Вăл паром Аппенин çурутравĕ çинчи чугунçул системин юлашки пункчĕпе (Реджо ди Калабриа) Сицили утравĕ çинчи чугунçул системин пуçламĕш пункчĕ (Мессина) хушшинче çÿрет.

Сицилия Италин чи лайăх ялхуçалăх облаçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Сицилире пĕтĕм юрăхлă çĕр лаптăкĕн 69 процентне тырпул акса тăраççĕ. Тĕштырă туса илес тĕлĕшпе Сицилия—Италире иккĕмĕш вырăн, урпа туса илес тĕлĕшпе пĕррмĕш вырăн йышăнса тăрать. Цитрус культурисем тĕлĕшпе Сицилия çав культурăсен пĕтĕм Италири продукцийĕн 80 процентне парса тăрать. Тата унсăр пуçне Сицилия иçĕм çырли, олива çырли тата пахча-çимĕçсем тĕлĕшпе те паллă вырăн йышăнса тăрать. Сицилире промышленность вăйлă мар. Унта хăшпĕр миниралсене (кĕкĕрт, тăвар) кăлараççĕ тата ялхуçалăх продукцине ĕçлесе тăракан фабрикăсем пур (консервăсем тăваççĕ).

Сицили сăртлă-туллă çĕршыв. Чылай ту хысакĕсем (Аппенин тăрри) 1000—2000 метр çÿллĕшне çитеççĕ. Этна ятлă вулкан тăрри 3280 метр çÿллĕшне çитет.

Сицилире чугунçулсем чылаях йышлă (пĕтĕмпе илсен вĕсен тăрăшшĕ 2086 километра çитет), автомобильпе çÿремелли çулсем нумай (вĕсен тăршшĕ 4976 километра çитет).

Сицилин тĕп хули — Палермо (унта 390 пин çын пурăнать). Пысăк хуласенчен иккĕмĕшĕ — Мессина (унта 183 пин çын). Сицилин чи паллă порчĕсем çаксем: Палермо, Мессина, Катания, Сиракузы, Ликата, Марсала, Трапани.

Сицили утравĕ çинче итальянецсем авиабазăсем, çавăн пекех тата самолетсем лармалли площадкăсем чылай тунă. Тинĕс çарĕн чи паллă базисем тата тĕреклетнĕ пункчĕсем çаксем: Кастелламмаре, Трапани, Марсала, Шакка, Порто Эмпе Докле, Сиракузы, Катания, Мессина, Палермо.

Фронтовиксен çырăвĕсем

Веретенино ялĕнчи трагеди

Ялсовет исполкомĕн секретарĕ комсомолка Анастасия Макарова, нимĕç оккупанчĕсен пусмăрĕнче ирттернĕ асаплă кунсене аса илсе, çапла пĕлтерчĕ:

«...Мĕн-мĕн кăна тÿссе ирттерннине каласа пама сăмах та çитмест. Ĕмĕрне те асран тухмĕç вăл хура кунсем».

Чăпахах, нимĕçсен ирсĕр ĕçĕсене сăмахпа каласа пама та çук.

Вăрман варринче, лапамра, йĕркерен ларса тухнă çуртсем вырăнĕнче—халĕ кăмрăк, кĕл... Кăмрăкланнă пĕрене пуçĕсемпе пĕчченшерĕн курăнакан кăмака мăрьисем кунта ял пулнине аса илтереççĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе çунса тата шăранса юрăхсăра тухнă самовар, çĕвĕ çĕлемелли машина, велосипед выртнине куратăн. Нимĕçсем яла тытса иличчен кашни колхозникĕн хăйне мĕн кирли пурте пулнă.

Шыв армачĕ пулнă вырăнта икĕ хĕрарăм кĕпе чÿхеççĕ. Армание нимĕçсем сирпĕнтерсе янă. Тĕлĕ-тĕлĕпе çĕрулми нÿхрепĕсенчен тĕтĕм пăсланса тухать.

56 çулхи колхозница Анисия Рязанцева çур михĕ çĕрулми тултарнă та çывăхри яла кайма тухнă. Çийĕнче—кивелсе çитнĕ кĕрĕк. Унăн мĕнпур çипуçĕ, килçурчĕ хăйĕнпе пĕрле:

— Мĕнле пурăнкалатăн, мамаша,—сăмах хушрăм колхозницăна.

— Ывăлăма, Федяна (вăрçă пуçланиччен тракторист пулнăччĕ вăл), нимĕçсем персе вĕлерчĕç. Пÿлĕнсе ситнĕ Шурăна та...

Урăх пĕр сăмах та калаймарĕ вăл. [illegible]

Федя партизан пулнă, Шурă партизансене продуктсем пухса парса пулăшнă. Çамрăк патриотсене эпир нихăçан та манмăпăр.

Нимĕçсем Павел Чумаков колхознике персе, унăн арăмне—Акулинăна çакса вĕлернĕ. Комсомолка Валентина Дикановă ÿчĕ чылай хушă вĕрен çинче çакăнса тăнă. Ăна пытарма ирĕк паман.

— Ав куратăр-и, сирĕн партизан, комсомолка... Кам партизансемпе вĕсен çемьисем çинчен пĕлтермест, çавна çакса вĕлеретпĕр,—тесе кăшкăрнă нимĕçсен усал йытти, сайра шăллă офицер.

Вăхăтлăха фашистсен пусмăрне лекнĕ совет çыннисем пĕрмаях Хĕрлĕ Çар килессе кĕтсе пурăннă. Кашни çын, хăй пултарнă таран, партизансене пулăшса тăнă. Юратнă тăван çĕршыв пĕр самантлăха та асран тухман.

Колхозник Михаил Алесинăн килне пĕр ирхине виçĕ нимĕç пырса кĕнĕ.

— Каласа пар-ха, Алесин, миçе пăт çĕрулми пухса патăн партизансене? Камсем партизансене пулăшни тата партизансем ăçта пытанса пурăнни çинчен каласан, санăн пурнăça сыхласа хăварăпăр. Хăвăн пуçупа лайăххах шухăшласа пăх...

Алесин нимĕç офицерĕн пĕр ыйтăвне хирĕç те ответлемен. Вара фрицсем унăн алли-урине çыхса, ăна çунса тăракан кăмакана пăрахнă. Çак тискер трагедие унăн арăмĕпе вунтăватă çулхи ачи пăхса тăнă.

[illegible]

Старик чĕнмен. Вара ăна урама илсе тухса ялçыннисен куçĕ умĕнче персе вĕлернĕ. Нумаях та вăхăт иртмен, нимĕçсем «Ударник» колхоз председателĕн—Рязанцевăн арăмне тытса кайса, вăрман варринче çакса вĕлернĕ.

Темĕнле тискерлĕх те, темĕнле асаплăх та совет çыннисен чун-чĕрийĕсене хуçайман, вĕсен ĕмĕчĕсене татайман! Вĕсем Хĕрлĕ Çар хăйсене нимĕç чуринчен çăлса хăварасса ĕненнĕ.

Хĕрлĕ Çар Веретенино ялĕнчи колхозниксене пусмăрлăхпа асаплăхран çăлса кăларса, нимĕçсене чылай инçете хăваласа ячĕ. Анчах хура кунсем нихăçан та асран тухмĕç. Нимĕç кашни çынпăн чун-чĕрине кăварлантарнă.

— 1942 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнче, пукрав кунĕнче пулас,—каласа парать Анастасия Макарова,—пирĕн яла хĕçпăшаллă бандитсем хупăрласа илчĕç.

— Пурте пĕр çĕре пухăнăр. Кам та кам вунă минута хушшинче çак вырăна килсе çитмест, ăна персе вĕлеретпĕр,—тесе хăратса пĕлтерчĕ нимĕç офицерĕн приказне переводчик.

Штыксемпе тата прикладсемпе хăваласа, ватти-вĕттине, сывмар çынсене—йăлтах, пĕр çын юлмиччен, ял варрине пухрĕç. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, пурне те йĕркерен тăратса тухрĕç те çывăхри яла хăваласа кайрĕç. Мирлĕ, хĕçпăшалсăр çынсене нимĕçсем винтовкăсемпе, автоматсемпе, пулеметсемпе хупăрласа илчĕç...

Ватă старриксемпе карчăксем, вăйпитти колхозниксемпе çул çитмен ачасем пуçĕсене усса малалла утса пынă. Сывмаррисене фрицсем прикладсемпе тĕрте-тĕрте хăваланă. Колхозниксене [illegible]

Веретенино ялĕнчи пур çуртйĕрсене те пĕр самантра тивертсе янă.

— Партизансем!..—кăшкăрать сайра шăллă гитлеровец, çатан карта çумне ларса тухнă арçынсем çине пăхса. Вĕсене хирĕç, уйрăмăн тепĕр енче, хĕрарăмсемпе ачасем лараççĕ. Тĕттĕм пулса çитеспе хĕрарăмсене пĕр сарайне, арçынсене тепĕр сарайне хупса лартнă. Виçĕ кун хушши асаплантарнă хыççăн, арçынсене вăрман хĕрне илсе тухнă.

— Сирĕн пурăнмалли нумай юлмарĕ. Камăн пурăнас килет, партизансем çинчен пĕлтермелле. Кам калас тет, ак кунта тухтăр...

Совет патриочĕсем пĕр сăмах та чĕнмен. Вĕсемшĕн пуриншĕн те тăван çĕршыв хаклă пулнă. Вĕсем пурте Гитлерăн йыттийĕ çине йĕрĕнсе пăхса ларнă.

— Тепĕр виçĕ минутăран пĕлтерместен, персе вĕлеретпĕр,—сехечĕ çине пăхса хăратнă офицер. Анчах никам та пĕр сăмах та чĕнмен. Çав самантрах виçĕ пулемет шăтăртаттарма тытăннă. Вăрман çумĕнче 92 арçынăн ÿчĕсем хускалмасăр выртнă. Каннибалсем пин айăпсăр çынсене персе вĕлерсе, хăйсен преступленийĕн списокне тăснă.

Веретенино ялĕнче 165 кил, икĕ шкул çурчĕ, ялпо правленийĕ, магазин пулнă. Халĕ пĕр çурт та çук. Вĕсене нимĕçсем çунтарса пĕтернĕ. Колхозăн 4 ферма пулнă. Вăрă-хурах нимĕçсем пĕтĕм вылăх-чĕрлĕхе илсе кайнă.

Тăлăха юлнă хĕрарăмсемпе çамрăк ачасем çĕлен-калтасен тискер ĕçне нихăçан та манмĕç. Хĕрлĕ Çар фашистсене ахаль каçармĕ.

Капитан Т. МАЙОРОВ
Действующи Арми.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хусанти М. Горький ячĕпе тăракан Государствăн Ялхуçалăх Институчĕ çак кĕркунне уйхир ĕçĕсен факультечĕн 1-мĕш курсне студентсем илесси çинчен пĕлтерет. Институтра 4 çул вĕренмелле.

Вĕренме кĕмелли условисем ытти аслă шкулсенчи пекех.

Вĕренме кĕвĕ студентсем валли общежити пур, апат лайăх çитерессĕ.

Института кĕме паракан заявленисене август уйăхĕн 31-мĕш числиччен йышăнассĕ.

Институтра вĕренмĕ октябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнче тытăнассĕ.

Института вĕренме кĕрес текенсен заявленисене вĕрле çак документсене ямалла: 1) вăтам шкултан вĕренсе тухнине пĕлтерекен документ, 2) автобиографи, 3) 3 фотокарточка.

Заявленисене çак адреспа ямалла: Хусан хули, пл. 11, Ялхуçалăх институчĕ. Институт директорĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 169 Типографи № 1 Управлени полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. а.